26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ИЮНЬ
29
ЫТЛАРИКУН
133(6370) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Çамрӑксем, тырпулсене пухса кӗме лайӑх хатӗрленӗр!

Комсомолӑн республикӑри организацийӗсем тӑрӑшса тата пуçарулӑн ӗçлеввипе, çуракине хатӗрленӗ чухне ялхуçалӑх машинисен пайӗсем 214.750 тенкӗлӗх пухнӑ, 11.294 плуг, 12.667 сӳре, 1.116 сеялка юсанӑ. Колхоз çамрӑкӗсен вӑйӗпе уй 1.210.900 лав тислӗк кӑларнӑ, 33.390 центнер кӗл, 25.109 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ, 193.700 центнер вӑрлӑх тасатнӑ, 1.400 центнер çӗрулми тӑррине касса хатӗрленӗ.

ВЛКСМ райкомӗсемпе пуçламӑш организацийӗсем çуракинче комсомолецсемпе çамрӑксене ак-виçӗ хут ытларах вӑй хурса ӗçлеме мобилизацилесе тӑчӗç. Сӗршер комсомолецсем стахановла ӗçӗн лайӑх тӗслӗхӗсене кӑтартса пачӗç.

Комсомолецсемпе çамрӑксем уборкӑна хатӗрленсе ирттерес ӗçсене те хастарлӑн хутшӑнмалла, хӑйсен пултарулӑхӗле пуçарулӑхне кӑтартса памалла.

ВЛКСМ Обкомӗн çак кунсенче пулса иртнӗ VII-мӗш пленумӗ çуракин итогӗсемпе уборкӑна хатӗрленсе ирттерес ӗçри задачӑсем çинчен сӳтсе явнӑ. Докладчик — ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Беляков юлташ тата прениере тухса калакансем республикӑра уборкӑна хатӗрленес ӗçсем сӳрӗккӗн пулса пынине палӑртрӗç. Пленум комсомол организацийӗсене вӑл çитменлӗхсене сийӗнчех пӗтерме, уборкӑна хатӗрленсе ирттерес ӗçсенче ВКП(б) Обкомӗн XV-мӗш пленум решенийӗсене тӗп никӗсе хума хушрӗ.

Тырпулсене пухса кӗме хатӗрленес ӗçӗн тӗп ыйтӑвӗ — уборка машинисемпе транспорт инвентарӗсене вӑхӑтра юсаса хатӗрлесси пулса тӑрать. Анчах ку ӗç республикӑри колхозсемпе МТС-сенче питех те сӳрӗк пырать-ха. Кӑçал çуракине иртнӗ çулсенчен нумай ирттерех вӗçленӗ пулин те, республикӑри чылай колхозсемпе МТС-сем уборка машинисене халӗ те тивӗçлипе юсама тытӑнман. Комбайнсемпе молотилкӑсене, жнейкӑсемпе лобогрейкӑсене, транспорт инвентарӗсемпе лаша кӳлмелли хатӗрсене юсасси, амбарсемпе овощехранилищӗсене, витнӗ итемсемпе сушилкӑсене юсасси е çӗнӗрен тӑвасси питех юлса пырассӗ. Ялти комсомолецсемпе çамрӑксем çак ӗçсен хӑвӑртлӑхне ӳстерессишӗн çителӗксӗр кӗрешессӗ.

Ялти комсомолецсемпе çамрӑксен уборка машинисене юсас ӗçе активлӑн хутшӑнмалла тата ку ӗç мӗнле пынине ҫывӑхран контрольлесе тӑрас пулать.

Машинӑпа тырӑ выракан специалистсем фронта кайнӑ май, кӑçал çамрӑксен вӗсен вырӑнӗсенче ӗçлеме лекет. Çавӑнпа çамрӑксене уборка машинисем çинче ӗçлеме вӗрентес пулать. Ку ӗçе çитес кунсенчех туса çитермелле.

МТС-сенчи комсомол организацийӗсен куçса çӳрекен мастерскойӗсене хатӗрлес ӗçсене, куçса çӳрекен мастерскойсем валли çителӗклӗ таран инструментсем тата машина пайӗсем хатӗрлес ӗçсене хӑйсен аллине илмелле.

ВЛКСМ райкомӗсемпе пуçламӑш организацисен комсомолецсене уборка вӑхӑтӗнче чи ответлӑ ӗçсене уйӑрса лартас пулать. Комсомолецсемпе çамрӑксем колхозсен руководителӗсене комбайн агрегачӗсене пухса йӗркелеме пулӑшчӑр, комбайн валли горючи, шыв турттарас тата комбайн çапнӑ тырра амбарсене кӳртессе турттарас ӗçсене активлӑн хутшӑнччӑр.

Пленум ВЛКСМ райкомӗсене çапла тума хушрӗ: комсомолецсем комбайнсемпе молотилкӑна йӗркеллӗн ӗçлеттерессишӗн ответлӑ пулса тӑччӑр. Комбайнсемпе молотилкӑсене йӗркеллӗ ӗçлеттерес тесе, ӗç вӑйӗ çителӗклӗ парса тӑмалла. Çав шутпа япӑрласа комсомолецсемпе çамрӑксен авӑн çапакан бригадисене организацилемелле, вӗсене кунне 20 сехетрен кая мар ӗçлеттермелле.

Тӑккаланчӑкпа кӗрешесси — комсомолецсен хисеплӗ тивӗçлӗхӗ. Тырпулсене тирпейлӗн пухса кӗртес тесе, тырӑсем тӑкӑнса пӗтессе çитесе кӗтмесӗр, пулса çитнӗ уйрӑм участоксене суйласа вырма тытӑнмалла. Жнейкӑсемпе комбайнсем çумне зерноуловительсемпе пучах пуçтармаллисем туса майлаштармалла. Шкул ачисене пучаха алӑпа пухас ӗçе мобилизацилемелле. Тырӑ вырнипе пӗр вӑхӑтрах кӗлте кӳме пуçламалла, ку ӗçе тырӑ вырса пӗтернӗ хыççӑн 10 кунран кая юлмасӑр вӗçлемелле. Бригадирсен колхозниксем вырса пуçтарнӑ кашни участока, колхоз председателӗсен — бригадӑсен участокӗсене тӗплӗн тӗрӗслесе йышӑнмалла. Комсомолецсемпе çамрӑксем колхоз руководителӗсене ку ӗçре ӗçлӗн пулӑшма тивӗçлӗ.

Ялхуçалӑх продукчӗсене хатӗрлесси ялхуçалӑх çулне вӗçлекен тапхӑр. ВЛКСМ Обкомӗн пленумӗ комсомол организацийӗсене государствӑна тырӑ парас ӗçе вӑхӑтра туса ирттерме хушса хӑварчӗ. Государствӑна ялхуçалӑх продукчӗсем вӑхӑтра парса тӑни — Пӗтӗм Союзри Социализмлӑ ӑмӑртура мала тухмалли условисенчен чи кирли пулса тӑрать. Государствӑна тырӑ парас ӗçе вӑхӑтра тума пирӗн республикӑн майсем пур. Çак ӗçе ӑнӑçлӑн ирттерес тесе, пленум комсомол организацийӗсене кашни колхозрах комсомолецсемпе çамрӑксенчен государствӑна тырӑ лесес тӗлӗшпе ӗçлекен транспорт бригадисем организацилеме хушрӗ. Бригада валли çителӗклӗ таран турттӑм вӑйӗ, транспорт инвентарӗсем тата михӗсем уйӑрса памалла.

Комсомолецсен колхозри мӗнпур ӗçсен организаторӗсем пулмалла. Иртнӗ çулсенче яслисемпе ача сачӗсем пулман е йӗркеллӗ ӗçлемен пирки, республикӑри хӑшпӗр колхозсенче ачаллӑ хӗрарӑмсем уборка ӗçӗсене активлӑн хутшӑнмарӗç. Кӑçал уборка ӗçӗсене хутшӑнман пӗр колхозница та пулма тивӗçлӗ мар. Комсомол организацийӗсен кашни колхозрах ача яслисем уçмалла тӑвас пулать, яслисенче ӗçлекен кадрсене халех хатӗрлесе çитермелле.

Пленум ВЛКСМ райкомӗсемпе пуçламӑш организацийӗсене тырпулсене пуçтартан, вӑрӑсенчен сыхлас ӗçе лайӑхрах организацилеме хушрӗ.

Çак ӗçсене ӑнӑçлӑн пурнӑçа кӗртессишӗн комсомол организацийӗсен колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе вӑрçӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек туса пырас пулать. Кашни уйӗç бригадинче, комбайн агрегатӗнче агитатор пултӑр. Колхозсен уйхирӗсенче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ямалла.

Чугунçул валли вутӑ хатӗрлӗмелли фронтовой вунӑкунлӑх

Хаклӑ вӑхӑта усӑсӑр ирттерсçӗ

КАНАШ. Июнӗн 28-мӗш. (Телефонпа). Чугунçул валли вутӑ хатӗрлемелли фронтовой вунӑкунлӑхра районӑн 5 пин кубометр вутӑ хатӗрлесе турттармалла, вӑл шутран паянхи куна 3.198 кубометр хатӗрленӗ, 1.900 кубометр турттарнӑ. Ку ӗçре 83 çын çуран, лашапа 122 çын ӗçлеççӗ. Шмидт тата Сталин ячӗсемпе тӑракан колхозсем вунӑкунлӑхӑн графикне пурнӑçларӗç.

Хӑшпӗр колхозсем вутӑ хатӗрлес ӗçе çителӗклӗ таран ӗç вӑйӗ парса тӑмаççӗ-ха. Тӗслӗхрен, «Коминтерн», «Красный Путиловец», Калинин ячӗпе тӑракан колхозсенче ӗçре вӑхӑтпа туллин усӑ курмаççӗ. Час-часах вӑрманта 7—8 сехет çеç ӗçлеççӗ. Ситменнине ӗçлекенсем кашни кун сывӑрма киле çӳреççӗ. Хӑш кун 2—3 çын ӗçлеме те тухмаççӗ. Çавна пула ӗнтӗ ӗç чарӑнса тӑрать.

Колхоз председателӗсен çак йӗркесӗрлӗхсене халех пӗтермелле.

А. ДУБРОДУШЕВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Пирӗн авиаци Брянск чугунçул узелне, Навля станцине тата тӑшман аэродромӗсене тапӑнни

Июнӗн 26-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн инçене вӗçекен авиаци Брянск чугунçул узелне, Навля станцине тата тӑшман аэродромӗсене тапӑннӑ. 1-мӗш Брянск тата 2-мӗш Брянск чугунçул узелӗсене уйрӑмах вӑйлӑн тапӑннӑ. Тӑшманӑн унти склачӗсемпе эшелонӗсем çине бомбӑсем питӗ нумай пӑрахнӑ. Пушарсем нумай тухнӑ. Темиçе питех те вӑйлӑ взрыв пулнӑ, хыççӑн уйрӑм пушарсем пӗрлешсе кайса темиçе питех те вӑйлӑ пушар пулса тӑнӑ. Вӗсем чугунçул узелӗн пысӑк пайне ярса илнӗ.

Аэродромсенче нимӗç самолечӗсене чылай пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ. Пирӗн 2 самолет хӑйсен базисене таврӑнман.

Пирӗн авиаци Орел чугунçул узелӗ çине тата тӑшман аэродромӗсем çине бомбӑсем пӑрахни

Июнӗн 27-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн инçене вӗçекен авиаци Орел чугунçул узелне тата тӑшман аэродромӗсене тапӑннӑ.

Бомбӑсем пӑрахнипе пула Орел чугунçул узелӗнче 16 вӑйлӑ пушар тухнӑ. Тӑшманӑн чугунçул эшелонӗсем çунса кайнӑ. Пушарсем вӑхӑтӗнче темиçе вӑйлӑ взрыв пулнӑ.

Çавӑн пекех тата пирӗн самолетсем сигналсем тӑшман аэродромӗсенче пушарсемпе взрывсем нумай пулнине асӑрханӑ.

Пирӗн самолетсем пурте хӑйсен базисене таврӑннӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 26-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Июнӗн 26-мӗшӗнче фронтра нимӗнле палла улшӑнусем те пулман.

Финн заливӗнче пирӗн летчиксем тӑшманӑн хуралта çӳрекен катерне шыва путарнӑ тата пӗр тральщикне сиенленӗ.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗн пӗр участокӗнче пирӗн разведчиксем тӑшманӑн пралук карнӑ вырӑнӗ урлӑ каçса малти траншейӑсене вӑркӑнса кӗнӗ те унти нимӗç салтакӗсене йӑлтах вӗлерсе пӗтернӗ. Сӗнӗ вӑй илсе пырса, нимӗçсем советсен разведка тӑвакан отрядне çавӑрса илме хӑтланнӑ, анчах та вӗсен ку ӗç ӑнӑçлӑ пулман. Разведчиксем нимӗçсен икӗ контратакине те пӗрин хыççӑн теприне сирсе янӑ, унтан пулеметсен вучӗ хӳттипе каялла таврӑннӑ. Çапӑçу хирӗнче тӑшман виллисем 60-тан кая мар выртса юлнӑ. Разведчиксем кирлӗ сведенисем илсе килнӗ тата темиçе çынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Белгород районӗнче пӗр чаçри летчиксем — Гриднев майорпа кӗçӗн лейтенант Лисицына нимӗçсен «Юнкерс-88» бомбардировщикне атакӑланӑ. Тӑшман самолечӗн сылтӑмри моторне вут хыпса илнӗ. Çав вӑхӑтра Гриднев майор нимӗçсен «Фокке-Вульф—190» йышши истребитель вӗсем патне сывӑхарса пынине курнӑ. Майор хӑйӗн çулне улӑштарнӑ та тӑшман самолетне атакӑланӑ, пулеметпа темиçе черет персе ярса, ӑна çӗре ӳкернӗ. Çав хушӑра кӗçӗн лейтенант Лисицына «Юнкерса» персе ӳкернӗ. Часах пӗлӗтсем хыçӗнчен тата 2 нимӗç самолечӗ сиксе тухнӑ. Анчах Гридневӑн урӑх боеприпассем пулман, çавӑнпа та вӑл çав самолетсемпе çапӑçман. Нимӗçсем хӗçпӑшалсӑр Гриднева хӑвалама тытӑннӑ, анчах вӑл пӗлӗтсем хушшинче питӗ ӑста маневрсем туса пынӑ. Хайхи нимӗç самолечӗсем асӑрхаймасӑр пӗр-пӗрне пырса çапӑннӑ та çавӑнтах пӗтнӗ. Гридневпа Лисицына хӑйсен аэродромӗ çине тӗрӗс-тӗкелех анса ларнӑ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хӗвеланӑçнерехре Трофимов капитан командир пулса тӑракан батарейӑри артиллеристсем юлашки 5 кун хушшинче 5 нимӗç блиндажне, 2 пулемет точкине пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшман артиллерийӗн 2 батарейине пусарса лартнӑ. Тӑшман позицийӗсене персе, артиллеристсем гитлеровецсене пӗр рота таран вӗлерсе тӑкнӑ.

* * *

Ленинград фронтӗнче снайперсем 90 гитлеровеца вӗлернӗ. Артиллеристсемпе минометчиксен подразделенийӗсем тӑшман оборонин сооруженийӗсене персе, 8 дзотпа 6 блиндажа ишсе антарнӑ.

* * *

Барановичи облаçӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен «Тӑван çӗршывшӑн» ятлӑ отрячӗ, халӑх пурӑнакан пӗр пысӑк пункта сасартӑк вӑркӑнса кӗнӗ те нимӗçсен аммуници складне çунтарса янӑ. Склад хуралне тыткӑна илнӗ. Лазо ячӗпе тӑракан отрядри партизансем ушкӑнӗ тӑшманӑн фронталла каякан çар поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Пӗр паровоз, 11 вагонпа платформа ваннӑ.

* * *

Хӗрлӗ Çар енне нимӗçсен 406-мӗш пехотнӑй полкӗнчен 4 салтак каçнӑ. Вӗсенчен пӗри, Лео Велс ятлӑскер, çапла каласа кӑтартнӑ: «Эпӗ Люксембург сынни. Гитлеровецсем манӑн тӑван çӗршыва чуралантарса пӗтерсе лартрӗç, ӑна Германи пайӗ пек туса хучӗç. Çавӑнпа та эпӗ гитлеровецсене кураймастӑп. Гитлерӑн Люксембургри наместникӗ, Симон палач, манӑн тӑван çӗршыва гестаповецсемпе тултарчӗ, халӑх патриочӗсене çӗрӗ-çӗрӗпе, пинӗ-пинӗпе тӗрмене хупса лартрӗ. Люксембург халӑхӗ Европӑра иккӗмӗш фронт уçӑласса кӗтсе тӑрать. Иккӗмӗш фронт уçӑлсанах вӑл нимӗç оккупанчӗсене хирӗç массӑллӑн çапӑçма пуçлать. Мана та, ытти люксембуржецсене те нумайӗшне гитлеровецсем вӑйпа ирӗксӗрлесе нимӗç салтакӗ туса хучӗç. Персе пӑрахассипе хӑратса, мана нимӗç мундирне тӑхӑнтартрӗç. Анчах та нимӗçсем мана Гитлершӑн вӑрçтарма пултараймарӗç. Эпӗ тата манӑн юлташсем те май килсенех вырӑссем енне куçрӑмӑр».

* * *

Черногорире, Герцоговинӑра тата Санджакра хаяр çапӑçусем пыраççӗ. Югослави патриочӗсем Италипе Германи оккупанчӗсен атакисене сире-сире яраççӗ. Пӗр Лекеник ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктра патриотсем тӑшман колоннине атакӑланӑ. Виçӗ сехет хушши пынӑ çапӑçура тӑшман, виллисене кӑна шутласан та, 30 салтак çухатнӑ. Партизансем пӗр миномет, 25 винтовка тата боеприпассем нумай тытса илнӗ, тыткӑна та илнӗ. Пожаревец хули патӗнче партизансем 55 нимӗç полицейскине вӗлернӗ. Загребпа Белград хушшинчи чугунçул çинче патриотсем грузсем турттарса пыракан çар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушенире паровоз тата 8 вагон çӗмӗрӗлнӗ. Тепӗр районра патриотсем тӑшманӑн 2 складне çунтарса янӑ, темиçе вунӑ гитлеровеца вӗлерсе тӑкнӑ.

Июнӗн 27-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Июнӗн 27-мӗшӗнче фронтра палла улшӑнусемех пулман.

Хура тинӗсре пирӗн летчиксем тӑшманӑн подводнӑй лодкине персе сиенленӗ.

Иртнӗ эрнере, июнӗн 20-мӗшӗпе 26-мӗшӗ хушшинче, пирӗн самолетсем, зениткӑй артиллери тата пехота тӑшманӑн 211 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Унсӑр пуçне, нимӗçсен нумай самолетне пирӗн авиаци тӑшман аэродромӗсене тапӑннӑ чухне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ. Çав вӑхӑт хушшинче пирӗн 74 самолет пӗтнӗ.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗнче пӗр чаçӑн артиллерисчӗсем тӑшманӑн артиллери батарейине тата 7 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр участокра нимӗç пехотин отрячӗ разведка тума хӑтланнӑ. Пӑшалсемпе, пулеметсемпе персе, гитлеровецсене пирӗн оборонӑн малти хӗррине çитиччченех саланласа янӑ.

* * *

Орел хулинчен кӑнтӑраралларахра пирӗн подразделенисем çапӑçса разведка тунӑ. Совет артиллерисчӗсем тӑшманӑн оборона сооруженийӗсемпе огневой точкисене персе, нимӗçсен артиллери батарейине, минометсен 7 батарейине, 26 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, 15 блиндаж, 5 дзот тата 4 наблюдательнӑй пункт çӗмӗрнӗ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хӗвеланӑçнерехре разведка тӑвакан ушкӑн, старшина Валевич ертсе пынипе, тӑшман тӑракан вырӑна кӗрсе кайнӑ та пӗр дзот, станковӑй пулемет тата тӑшманӑн 40 çити салтакне пӗтерсе тӑкнӑ. Разведчиксем темиçе çынна тыткӑна илсе пӗр çухатусӑрах хӑйсен чаçне таврӑннӑ.

Пирӗн истребитель тӑшман самолетне персе ӳкернӗ. Нимӗç летчикӗсене тыткӑна илнӗ.

* * *

Калинин фронтӗнчи пӗр участокра пирӗн подразделенисем çак кунсенче халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса илнӗ. Тӑшман хӑйӗн çухатнӑ позицийӗсене каялла тавӑрма хӑтланнӑ. Гитлеровецсем кункаçа ултӑ хут атакӑланӑ, кашни хутӗнчех пысӑк çухатусем тӳссе каялла тарнӑ. Ӑнӑçсӑр атакӑсенче вӗсен 400 çити салтакӗпе офицерӗ пӗтнӗ.

* * *

Ленинград фронтӗнче пӗр чаçан снайперӗсем 21 нимӗçе çити вӗлернӗ. Çав шутран снайпер Тимофеева 5 нимӗçе, Кириллова 3 нимӗçе, Попова 2 гитлеровеца вӗлернӗ. Артиллери подразделенийӗсем 2 оруди, 5 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ, 15 дзот, 13 землянка ишӗлтернӗ.

* * *

Смоленск облаçӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ тӑшманӑн 2 чугунçул эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушени вӑхӑтӗнче 2 паровоз, салтаксем ларса пынӑ 8 класнӑй вагон тата боеприпассем тиенӗ 23 вагон çӗмӗрӗлнӗ. Партизан подрывникӗсем чугунçул çинчи кӗпере сирпӗнтерсе янӑ, телефонпа телеграф сыхӑнӑвне пӑснӑ.

* * *

Нимӗçсен 3-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 117-мӗш полкӑн 3-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Вильгельм Шварц çапла каласа панӑ: «Вӑрçӑ пуçламӗшӗнчи ӑнӑçусемпе хавхаланнӑ нӑскерсем, эпир çисӗмле тӑвӑрт сӗнтерессине шанса тӑнӑ. Мускав патӗнче нимӗç войскисене аркатса тӑкни çав шанчӑка пӗрремӗш хут хавшатрӗ. Сталинград патӗнче пулнӑ катастрофа вара лайӑх малашлӑха ӗненсе тӑракансене те ӑнтан ячӗ. Нумай салтаксем Российӑна çӗнтерме çук тесе шухӑшла пуçларӗç. Нимӗç хаçачӗсем Европӑра иккӗмӗш фронт уçма çукки çинчен тахçантанпах çыраççӗ ӗнтӗ. «Европӑри крепоçӑн» укреплениӗсене нимӗç хаçачӗсен кашни номерӗнчех мухтаса çыраççӗ. Анчах çапла çырнин усси çук, вӑл иккӗмӗш фронт уçӑлас хӑрушлӑх мӗн тери пысӑккине çеç кӑтартса парать. Салтаксем çавӑн пирки çапла калаççӗ: «Камӑн мӗн ыратать, вӑл уп çинчен калаçать», теççӗ. Нимӗç çарӗ икӗ фронтра вӑрах çапӑçма пултараймасси нумай сыншӑн паллӑ. Çавӑнпа Гитлер вӑхӑта тӑсас тесе, Хӗвеланӑçӗнче вӑрçӑ ӗçӗсем пуçланассине мӗн май килнӗ таран каярах хӑвараслӑн».

* * *

Данири хӗçпӑшаллӑ патриотсен ушкӑнӗ çӗрле Копенгагенри «Киюд тата Марстранд» заводӑн территорине кӗрсе кайнӑ. Патриотсем çав заводӑн машина отделенине вӑрахӑн хут хыпакан мина хунӑ та тарнӑ. Вунӑ минутӑран питӗ вӑйлӑ взрыв пулнӑ. Взрыв пысӑк сиен кӳнӗ. Завод вара нимӗç фашисчӗсем илсе тӑнӑ продукцие туса кӑларма пӑрахнӑ.

Машинӑсене юсарӗç

Вӑрнар районӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз кӑçал çур тыррисене кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа акса хӑварчӗ. Тикӗс шӑтса тухса лайӑх ӳсекен калчасем тырпул вӑйлӑ пулассине шантараççӗ.

Халӗ çак колхоз уборкӑна хӗрсех хатӗрленет. Нумай пулмасть С. Скворцовпа Н. Актисов колхозниксем колхозӑн 2 жнейка, 3 косилка, молотилка тата 3 лобогрейка юсаса пӗтерчӗç. Лаша кӳлмелли хатӗрсемпе урапасем те кунта юсавлӑ.

П. КУПЦОВ.

Эдуард Бенеш господина, Чехословаки республикин Президентне

ЛОНДОН

Совет Союзӗ çине нимӗçсен фашистла вӑрӑ-хурахӗсем тапӑннӑранпа икӗ çул çитнӗ май Эсир Чехословаки халӑхӗн ячӗпе Совет халӑхне, Хӗрлӗ Çара тата мана хама ӑшшӑн саламланӑшӑн Сире чӗререн тав тӑватӑп.

Пӗрлешнӗ мӗнпур нацисем активлӑн вӑй хурса кӗрешни çӗнтерӳ патне илсе çитерӗ тесе эпӗ Сирӗн пекех шухӑшлатӑп. Нимӗç захватчикӗсем пусмӑрлӑха кӗртсе ӳкернӗ халӑхсем çав çӗнтерӳпе часах ирӗке тухӗç.

М. КАЛИНИН.

Франклин Д. Рузвельт господина, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Президентне

ВАШИНГТОН

Совет халӑхӗпе унӑн хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен гитлерла захватчиксене хирӗç пыракан кӗрешӳри çирӗплӗхӗпе паттӑрлӑхне пысӑка хурса хакланӑшӑн Сире тав тӑватӑп.

Совет Союзӗ гитлерла Германипе унӑн васалӗсене хирӗç икӗ çул хушши кӗрешнипе тата союзниксем Италипе Германи çарӗсене Çурçӗр Африкӑра вӑйлӑн пыра-пыра çапнипе хамӑрӑн тӑшмана пуçӗ х çапса аркатма условисем туса хунӑ.

Эпир тӑшмана хӗвелтухӑçӗнчен тата хӗвеланӑçӗнчен мӗн чухлӗ хӑвӑртрах пӗрле пырса çапатпӑр, çӗнтерӳ, эпӗ кун пирки иккӗленместӗп, çавӑн чухлӗ хӑвӑртрах пулӗ.

И. СТАЛИН.

Цзян Чжун-Чжен господина, Китайӑн нацилле правительствин исполнительнӑй Юанӗн Председательне

Совет халӑхӗ гитлерла агрессие хирӗç отечественнӑй вӑрçа тухни икӗ çул тултарнӑ май Эсир янӑ саламшӑн Сире тав тӑватӑп. Ирӗклӗхе юрататакан мӗнпур халӑхсен курайманлӑхне хӑйне хирӗç тӑратнӑ ултавлӑ тӑшманпа кӗрешнӗ çӗрте Хӗрлӗ Çар тунӑ çитӗнӳсене пысӑка хурса хакланӑшӑн эпӗ хам енчен тав тунине Сире йышӑнма ыйтатӑп.

И. СТАЛИН.

Франци халӑхне ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗçлекен Комитет, Жиро генерала, де Голль генерала

АЛЖИР

Совет Союзӗ гитлерла захватчиксене хирӗç ирӗклӗхшӗн вӑрçа тухни икӗ çул тултарнӑ май салам янӑшӑн Сире тата Франци халӑхне ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗçлекен Комитета тав тӑватӑп.

Франци халӑхӗ гитлерла пусмӑра хирӗç паттӑррӑн кӗрешни çине тата Францин чи лайӑх ывӑлӗсем, унӑн ура çине тӑракан хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсем Францие ирӗклӗхе кӑларса çӗнӗрен чӗртессишӗн вӑй хурса кӗрешни çине совет халӑхӗ пӗтӗм чун-чӗререн кӑмӑлласа пӑхать.

Союзниксем пӗрле вӑй хурса кӗрешни хамӑрӑн тӑшмана пуçӗпех те таткӑлӑнах çӗнтернипе вӗçленӗ тесе совет халӑхӗ шанса тӑрать.

И. СТАЛИН.

Спаак господина, Бельгин Ютçӗршыв ӗçӗсен министрне

ЛОНДОН

Гитлеровецсем Совет Союзӗ çине ултавлӑн килсе тапӑнни икӗ çул çитнӗ майпа Эсир ырӑ кӑмӑлпа ырӑ сунса саламланишӗн Сире тав тӑватӑп.

Ирӗклӗхшӗн тата хӑйсен çӗршывӗн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ылханла пусмӑрçасене хирӗç паттӑррӑн кӗрешекен Бельги халӑхӗ çине Совет Правительстви тата эпӗ хам пӗтӗм чун-чӗререн кӑмӑлласа пӑхни çинчен Сирӗнтен Бельги правительствине пӗлтерме ыйтатӑп.

В. МОЛОТОВ.

Çулсене юсамалли уйӑхлӑх

Çулйӗр ӗçӗнчен пӑрӑнмалла мар

КУСЛАВККА, июнӗн 25-мӗшӗ. (Телефонпа). Районра çулйӗр ӗçӗнче çуран 600 çын, лашапа 200 çын ӗçлеççӗ. «Победа», «Красный моряк», «Новый путь» колхозсем çулйӗр уйӑхлӑхӗнче чул кӑларас задание 104 процент пурнӑçларӗç.

Районра хӑшпӗр колхозсенче ку ӗç чӑтма çук юлса пырать. «Коммунар» (председателӗ Поляков), «Ударник» (председателӗ Московкин) колхозсем уйӑхлӑх пуçланнӑранпа та пӗр çын та ӗçлеме ярман. Ку таранччен 12 çын тата 2 лаша çеç ӗçлесе пычӗç. Çулйӗр уйӑхлӑхӗн графикне çуррине те пурнӑçлайман.

К. ПРЫТЧЕНКОВ,
Райсовет исполкомӗн председателӗ.

Çулйӗр ӗçӗпе интересленмеççӗ

ЭЛЕК. Июнӗн 28-мӗшӗ. (Хамӑр корр., телефонпа). Районри «Çутталла», «15 лет Октября», «1-ое Мая» колхозсем çулйӗр уйӑхлӑхӗнчи ӗçсене малтанхи кунӗсенченех аван организациленӗ. Вӗсем июнӗн 25-мӗшӗ тӗлне çулйӗр уйӑхлӑхӗн заданине ытлашшипех пурнӑçларӗç. «Çутталла» колхозран çулйӗр ӗçӗнче куллен 6 çын çуран, 2 çын лашапа ӗçлемелле пулсан, уйӑхлӑхӑн малтанхи кунӗсенчех куллен çуран 7 çын, лашапа 4 çын ӗçлерӗç. Кунта ятарласа çулйӗр бригади организациленӗ. Бригадӑна ӗçе юрататакан колхозник К. Федоров юлташ ертсе пырать. Унӑн бригади ӗçлеме ялан ирех тытӑнса сӗм тӗттӗм пуличчен ӗçлет.

Районӗпе илсен, çулйӗр ӗçӗ япӑх пулса пырать. Етӗрнепе Çӗмӗрле хушшинчи çул çинче куллен çуран 142 çын, лашапа 40 çын ӗçлемелле пулсан, паянхи куна çуран 48 çын, лашапа 22 çын çеç ӗçлет. Янгурас колхозӗ (председателӗ Сейт) вунӑ кун хушши çулйӗр ӗçне тухмасӑр тӑнӑ. Матек ялсоветӗнчи колхозсен çулйӗр ӗçне çуран 35 çын, лашапа 13 çын кӑлармалла пулсан, халӗ çуран 20 çын, лашапа 8 çын кӑна ӗçе кӑлараççӗ.

ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ ку ӗçе кирлӗ пек ертсе пымасть. Çулйӗр ӗçӗнче ӗçлекенсем патӗнче хӑйсем те райра хутра çеç пулкалаççӗ.

Х. ЛИСИН.

Иртен те ир пулакан çӗрулми

Мускав облаçӗнчи Ленински районри «Суханово» совхозра çитӗнсе çитнӗ паранка çак июнь уйӑхӗн çурринчех кӑларма пуçланӑ. Ӑна совхозри Анашин агрономӑн меслечӗпе лартса ӳстернӗ. Тайтарса пӑхсан, хӑшпӗр çӗрулмисем 80 грамм таран пуртаççӗ. Кашни тӗмрен 5—7 çӗрулми тухнӑ.

Анашин агроном меслечӗпе ӗçлесе çӗрулмине кирек хӑш хуçалӑхра та пӗр çура икӗ хутчен лартса туса илме пулать. Июлӗн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр çӗрулми тӗмӗсене павса кӑлараççӗ. Паранксене татса илнӗ хыççӑн паранкӑ аврине тымарӗ-мӗкӗпе тепӗр хут çӗнӗрен чавса лартаççӗ. Кирек хӑш участока та лартма юрать. Анчах та çӗре шӑварсан тата çимсам (тислӗк) хурсан лайӑхрах. Вара çапла ӗçлесен пӗр çура кашни гектар çинче 30 тонна çӗрулми туса илме пулать.

Халӗ Мускав, Куйбышев облаçӗсенче тата ыттисенче те пахча-çимӗç лартса тӑвакансем чылайӗшӗ Анашин опычӗпе усӑ курма пуçланӑ. (ТАСС).

Çурçул планне 120 процент тултарнă

Шупашкарти табак фабрики кăçалхи çурçул программине июнĕн 21-мĕшĕ тĕлне 120 процент пурнăçланă.

Овчинникова, Солдатченко, Гардина юлташсем ертсе пыракан цехсем çурçул планне майăн 31-мĕшĕ тĕлнех пурнăçланă. Паллă стахановецсем Федорова Макарова юлташсем кулленхи задание 150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Халĕ фабрика коллективĕ иккĕмĕш çурçул планне ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешет.

И. ЧЕЧЕТКИН,
Фабрика директорĕ.

Эрех завочĕ çурçулхи плана пурнăçланă

Шупашкарти эрех завочĕ июнĕн 27-мĕшĕ тĕлне кăçалхи çурçулхи плана 103 процента лхăн пурнăçларĕ.

Май уйăхĕнче продукци кăларма чĕртавар çителĕксĕр пулнă пирки завод лайăххăн ĕçлеймен. Уйăхри задание те 43,2 процент кăна пурнăçланă. Анчах июнĕн пуçламăшĕнчен завод йĕркеллĕн ĕçleme тытăнчĕ. Кирлĕ чĕртаварсем те вăхăтра килсе тăраççĕ.

Завод коллективĕ умĕнче май уйăхĕнчи задание тултарса, çурçул планне срокчен пурнăçлас задача тăнă. Задача пĕчĕк мар. Ăна пĕтĕмпе вăя хумасăр пурнăçлама çук. Рабочисемпе работницăсем инженерла техникла работниксем вăхăта шута илмесĕр ĕçleme тытăнаççĕ. Вĕсен пурри те — илнĕ обязательствăна тыслăн пурнăçлас, фронта çĕршыва планран иртгерсе продукци парас ĕмĕт. Çак ĕмĕтпе ĕçлесе вĕсем ĕç тухăçлăхне куллен вăйлатса пыраççĕ. Пĕр чарăнмасăр çирĕм кун ĕçленĕ хыççăн завод май уйăхĕнчи плана хăваласа çитрĕ; июнь уйăхĕнчи задание 68,3 процент пурнăçларĕ.

— Тĕплĕнмелле ĕçлеççĕ рабочисемпе работницăсем. Эпĕ ку заводра 35 çул ĕнтĕ ĕçлетĕп, анчах хальхи пек тухăçлăн ĕçленине астумастăп, — тет 71 çулхи старик Александр Константинович Сахаров юлташ.

Вăрçă вăхăчĕ пурне те улăштарчĕ. Заводри квалификациллĕ рабочисем вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта тухса кайрĕç. Вĕсен вырăнне килхуçи хĕрарăмĕсемпе çамрăк хĕрачасем ĕçleme тытăнчĕç. Вĕсем, кĕске вăхăт хушшинчех ĕç меслечĕпе паллашса çитсе, хăйсен заданине тултарса ĕçлеççĕ.

— Эпĕ заводра вăрçă пуçланнăранпа ĕçлетĕп. Малтанхи кунсенче мана ĕçleme йывăрччĕ. Анчах пурнăç мĕнле ĕçлемеллине хăй кăтартать, тултараймастăп, тума май çук, тесе лармалли вăхăт мар халь, — тет стахановка çамрăк хĕрача М. Захарова юлташ.

Заводра нормăна тултармасăр ĕçлекенни пачах та çук. Паллă стахановкăсем Кузьмина, Бахмутова, Ворпникова, Филиппова, С. Мурзаева юлташсем кашни кунах задание икĕ хут ытларах тултараççĕ.

Завод коллективĕ иккĕмĕш çурçулта татах та лайăхрах ĕçleme пулать. Çак кунсенче пулса иртнĕ пухура вăл хăй çине татăклă обязательствăсем илчĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Республика уйхирĕсенче

Паян тесен паян

Чкаловски районĕнчи нумай колхозсем хирти тырпула ăнăçлăн пухса кĕртме хатĕрленсе çитрĕç.

Киров ячĕпе тăракан колхоз 430 гектар çум çумларĕ, 120 гектар çĕртме турĕ, 25 тонна силос хывнă.

Ку колхозра 8 жнейка, вĕсенчен 7-шне юсанă, теприне паян-ыранах юсаса пĕтерессĕ. 4 молотилкăран 3-шĕ юсавлă, теприне юсаççĕ.

«Канаш» колхоз 290 гектар тырпула çумсенчен тасатрĕ, 100 гектар çĕртме сухи турĕ, 10 тонна силос хывнă.

Ку колхозра 4 жнейка, вĕсем пурте юсавлă. Кĕлте пурттармалли, тырă турттармалли урапасем çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

Çак колхозсем паян тесен паянах тырă вырма тухма пултараççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем уборкăна пур енчен те хатĕрленсе çитрĕç.

В. КУЗЬМИН.

Малтисемпе танлашмалла

Калинино районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем çĕртме сухине часрах туса пĕтерес тесе тăрăшса ĕçлеççĕ. Паянхи куна районра 27 колхоз çĕртме сухине туса пĕтернĕ ĕнтĕ. «Коминтерн» колхоз 120 гектар, «Броневик» колхоз 118 гектар, «Трактор» колхоз 170 гектар çĕртме туса, хăйсен планне 100 проценчĕпех пурнăçланă.

Çав вăхăтрах «Новая жизнь», «Смычка» колхозсем çĕртме сухине сÿрĕккĕн туса пыраççĕ-ха. Вĕсем хăйсен планне çуррине те тултарман-ха.

Çак колхозсен те çĕртме тăвас тĕлĕшпе малта пыракан колхозсемпе танлашмалла.

З. В.

Утă типĕтсе пуçтарасси

Лайăх, тутă тытакан утă туса илес тесен, типĕтнĕ чухне курăкăн пур çулçисене те тирпейлĕн тыткалама тăрăшас пулать, мĕншĕн тесен вĕсем курăкăн чи тухăçлă пайĕ пулса тăраççĕ. Утта çулса пăрахнă хыççăн темиçе сехетренех ăна валл туса тухмалла. Курăка паккусра типĕтме юрамасть.

Утта ăна типсе çитиччен ытларах тавăрма-куçарма тăрăшмалла. Курăк хăвăрт типекен вырăнсенче ăна çулса пăрахнă хыççăнах чĕрĕллех валл туса тухсан аван. Утăра 20—25 процент нÿрлĕх юлсан, ăна купала-купала тухмалла. Кунта вăл пĕтĕмпе типсе çитет.

Çулса пăрахнă курăк паккусра тата валра ытлашши ан выртгăр тесен, утă çулнă чухне пур ĕç те (уласси, пуçтарасси, купасем тăвасси тата капана хывасси) пĕр вĕçĕмсĕр пулса пымалла.

Утă çулас ĕçе хăвăртлатас майпа ку ĕçе вылльăх-чĕрлĕх бригадинчи колхозниксене те явăçтармалла, вĕсене утă çулма уйрăм участоксем уйăрса памалла е урăх ĕç (тавăрма, купа тума капана хывма) хушмалла.

Чи ответлă ĕç вăл—утта капана хывасси пулать. Ăна капана хывиччен ун айне çапă, шапча, хыр лăсси, кивĕ улăм е урăх япаласем хумалла. Апла тунипе уттăн капанра аялти пайĕ пăсăлмасть.

Утта капана уяр çанталăкра, кăнтăрла хывма тăрăшмалла, чĕрĕ çанталăкра, пĕтреллĕ вăхăтра, çумăр хыççăн, ирхи сывлăм типиччен, хĕвел ансан капана хывнă утă чĕрĕлсе кайма, шăршланса, кăвакарса кайма пултарать.

Капана хывнă чух утта малтан хĕррисене купаламалла, унтан варрине тултармалла, анчах варрине чи лайăх утта хурас пулать.

Капанăн варрисем хĕррисенчен çÿлерех пулмалла, вĕсене лайăххăн таптаса купаламалла. Купаласа пĕтернĕ хыççăн, капанран çумăр шывĕ çĕре лайăх юхса антăр тесен вĕсен хĕррисене кĕреплепе тураса çавăрăнаççĕ.

Пушартан-мĕнрен сыхланас тĕлĕшпе капансен хушши 100—150 метр пулмалла, çурт-хуралтсенчен вĕсем 250—500 метр аякра тăмалла.

Н. ТЕРЕНТЬЕВ.

Лаша лайăх пăхакана юратать

Вăрманкасри (Красноармейски район) «Сила» колхоз членĕсем старши конюх Михаил Григорьев лашасене лайăх пăхни çинчен яланах ăшшăн калаçаççĕ.

Чăнахах та Михаил Григорьевич лашасене питĕ юратать. Ирхине ирех витене пырать те лашасем тăракан кашни пÿлĕме кĕрсе пăхать, вĕсене ăшă кăмăллăн пуçĕсенчен лăпкать, ачашлать, ĕçленĕ çĕрте суранланман-ши, тесе уйрăмăн тĕрĕслесе тухать.

Лашасене ăста та пулин ĕçе кÿлсе каймалла пулсан, Михаил Григорьевич кашни лашан кÿлмелли хатĕрĕсене тĕплĕн тинкерсе пăхса тухать. Хăмăт пăявĕ ытлашши вăрăм пулсан, ăна кĕскетсе парать, йĕнерчĕк кантрисене кирлĕ пек майлаштарать, урхалăхсене тыткаласа пăхать. Пурте тĕрĕс пулсан çеç лашана çул çине кăларса ярать. Уйра ĕçленĕ чухне хăй те уя тухать. Çамрăксене лашасене тыткалама вĕрентет.

Бригадăри конюхсем Иванова, А. Васильева Н. Степанова юлташсем те старши конюх хушнисене ялан ытлеççĕ, вăл хушнă тăрăх ĕçлеççĕ. Вĕсем ирхине витере, кăнтăрла уйра пулаççĕ. Ĕçсем пĕтнĕ хыççăн кашни конюх хăй пăхакан лашана ĕçе кайнă çынтан тĕплĕн тĕрĕслесе йышăнать, урисене, кăкăрĕсене, çурăмĕсене тĕплĕн пăхать. Уйра суха тунă вăхăтра пĕр лашанне те кăкăрне хăмăт тивертмен, шăйăрттарман.

Кăçал çураки вăхăтĕнче кашни лашан 4,1 гектар сухаламалла пулнă. Апла пулин те колхоз çуракине кĕске срокра вĕçленĕ. Çураки пуçланиччен лашасене лайăх тăрантарнă, вĕсем вăйлă, мăнтăр пулнă. Маттур лашасемпе ĕçлесе, колхозниксем хăйсен кулленхи нормисене 120—200 процент тултарса пынă. Халĕ колхоз çĕртме тăвать, тислĕк тăкать. Ĕç малтанхи пекех хĕрÿллĕн пырать. Лашасем халĕ мăнтăрлансах пыраççĕ. Вĕсене тĕрĕс пăхни колхозниксене савăнтарать.

С. ШАДИН.

Ют çĕршывсенче

ССР Союзĕн Мексикăри посолĕ Уманский юлташ хăйĕн верительнăй грамотине Авила Камачо президента пани

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). (Ку телеграмма час çитмен). Мексико хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, ССР Союзĕн Мексикăри посолĕ Уманский юлташ июнĕн 22-мĕшĕнче хăйĕн верительнăй грамотисене Мексика президентне Авила Камачона панă.

Югославин çĕнĕ правительстви

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Югославин çĕнĕ кабинетне тунă. Унăн составĕнче çаксем тăраççĕ: премьер-министр (вăлах шалти ĕçсен министрĕ) Трифунович, вице-премьерсем—Иованович, Крневич тата Крек, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Грол, çар министрĕ Михайлович генерал т. ыт. те.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июнĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Рур облаçĕнчи Бохум—Гельзенкирхен районне вăйлăн тапăннă. Бомбăсем пăрахнă районра вăйлă пушарсем тухнă. Ку операцирен акăлчансен 30 самолечĕ каялла таврăнман.

Бельгипе Голландире пулса иртнĕ операцисем вăхăтĕнче Англи самолечĕсем аэродромсене тата ытти объектсене те атакăланă.

Июнĕн 25-мĕшĕнче американецсен йывăр бомбардировщикĕсен чылаях пысăк соединенийĕ Çурçĕр-хĕвеланăç Германири тĕрлĕрен объектсене тапăннă. Америка бомбардировщикĕсемпе тăшман истребителĕсем хушшинче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Нимĕç истребителĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. 18 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

Июнĕн 25-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем тăшманăн Канри (Франция) аэродромне атакăланă.

Июнĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Веллингтон» йышши бомбардировщиксем Сардинири Олбие атакăланă. Доксемпе сортировочнăй станцисен районĕнче пушарсем нумай тухнă. Июнĕн 25-мĕшĕнче кăнтăрла «Вĕçекен крепость» йышши самолетсен пысăк соединенийĕ Мессинăна тапăннă. Сортировочнăй станци çине тата доксен районне бомбăсем пăрахнă. Çак операцисем вăхăтĕнче тăшманăн 20 самолетне персе ÿкернĕ.

КĔСКЕН

▲ Югослави партизанĕсен ушкăнĕ нумаях пулмасть Загребпа Сунлик хушшинчи чугунçул çинче икĕ кĕпер сирпĕнтерсе янă. Загребпа Белград хушшинчи чугунçул çинче партизансем тăшманăн 22 эшелонне ÿлентерсе янă. Çав крушенисенче 11 паровоз, 172 вагон ваннă.

▲ Союзниксен авиацийĕ юлашки вăхăтра тапăннипе Италире 10 паровоз, 350 вагон юрăхсăра тухнă. Чугунçул сооруженийĕсем, сортировочнăй станцисем, вокзалсем, складсем т. ыт. те нумай ишĕлнĕ. Союзниксен авиацийĕ тапăнасран хăранипе Итали железнодорожникĕсем транспортри ĕçе пăрахса тараççĕ. Çавăн пирки вăра пур чугунçулсем çинче те ĕç арканса пырать.

Финляндире—выçлăх

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Финсен «Хельсингин Саномат» ятлă хаçачĕ Финляндин снабжени министрĕ Эллиля тухса калаçнине пичетлесе кăларнă. Эллиля çапла калать: пĕлтĕр кĕркунне халăха апат-çимĕç парса тăмалли плана тунă чухне эпир пирĕн тĕштырă иртнĕ çулхинчен чылай ытларах тухмалла тесе шутланăччĕ. Анчах пурнăçра ун пек пулмарĕ. Çавăнпа та влаçсем мĕн чухлĕ те пулин тĕштырă ютçĕрсенчен, урăхла каласан, Германирен илсе килме тăрăшрĕç. Анчах та, «ку ыйтупа калаçса тăтăлаймаи», тенĕ Эллиля. Эллиля каланă тăрăх, Финляндин хăйĕн питех те чухăн тĕштырă запасĕсемпе кăна çырлахса пурăнма тивет. «Пирĕн тĕштырă запасĕсем сахалланса юлчĕç,—тенĕ министр,—хальхи вăхăтра вăл запассем ытла та сахал, çавăнпа та халь парса тăракан çăкăр нормине пĕчĕклетме тивет», тенĕ вăл. Эллиля çакна асăрхаттарса каланă: «Пур хресченсен те пĕлтĕр вĕсене пурăнмалăх хăварнă тĕштырăран пĕр пайне халĕ государствăна парма тивет»,—тенĕ.

Эллиля тата çапла каланă: халĕ парса тăракан апат-çимĕç тата ытти продуктсен ахаль те çав тери пĕчĕк нормисене часах тата тепĕр хут чакармалла пулать, тенĕ.

Шведсен «Свенска Дагбладет» ятлă хаçачĕ çакна паллă тăвать: Финляндин продовольстви тĕлĕшĕнчи çивĕчленсе пыракан йывăрлăхĕсем, сăмахран каласан, çăкăр парса тăракан кулленхи нормăна 200 грамм таран кăна хăварни тата халăх вăрçă тĕлĕшпе ывăнса çитни çĕршывра политикăллă конфликтсем кăларса тăраççĕ, тет.

США-ра забастовкăсем тума чаракан закон йышăннă

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче представительсен палати забастовкăсем тума чаракан законопроекта ырланă. Представительсен палатинче çав законопроектшăн 219 депутат сасăланă, 129 депутат ăна хирĕç пулнă. Çав законопроект тăрăх, рабочисемпе предпринимательсем хушшинче тухнă конфликт производствăна кансĕрлет пулсан, çавăн пек кирек хăш предприятие те, вăрçă ĕçĕсене пуса пыма кирлипе президент хăй аллине илме пултарать. Законопроект правительство аллине куснă предприятисенче пуринче те забастовкăсем тума чарса лартать. Законопроект тăрăх, çавăн пек предприятисенче забастовка тума чĕнекен çынсене пĕр çулталăк таран тĕрмене хупса лартма пултараççĕ. Законопроект вăрçă вăхăтĕнче ĕç ыйтăвĕсене пăхса тăракан правительство управленине çар промышленноçĕнче пулакан конфликтсене йĕркеллĕ пĕтерес ĕçе хутшăнма полномочи парать. Законопроектăн 8-мĕш статьи тăрăх, çар заказĕсене тăвакан заводри рабочисен представителĕсем тата предпринимательсем хушшинче производствăна чарса лартма пултаракан конфликт тухни çинчен ĕç министрне, вăрçă вăхăтĕнче ĕç ыйтăвĕсене пăхса тăракан управление тата ĕç конфликчĕсен комиссине пĕлтермелле. Çапла майпа вара «рабочисене ĕçleme пăрахасси пирки вĕсем хăйсем мĕнле шухăшлани çинчен çав пĕлтерÿ хыççăн 30 кун хушшинче вăрттăн сасăласа пĕлтерме май памалла».

Çак законопроекта тата США сенатĕ те ырланă пулнă. Унта законопроектшăн 55 сасă пулнă, 22 сасă хирĕç пулнă.

Президент Рузвельт çар промышленноçĕнче забастовкăсем тума чаракан законопроекта пăрахăçа кăларнă. Сената çав ыйту пирки панă заявленире Рузвельт çапла каланă: вăл (Рузвельт) яланах вăрçă вăхăтĕнчи забастовкăсене хирĕç пулнă, анчах та, унăн шухăшĕпе, законопроект хăйĕн хальхи формипе хăйĕн тĕп тĕллевне—вăрçă вăхăтĕнче забастовкăсем тума чарассине пурнăçа кĕртме пулăшассишĕн ытларах ăна чăрмантарса тăрать тенĕ. Рузвельт хăйĕн заявленийĕнче çакна кăтартса панă: вăл çав законопроекта алă пуснă пулĕччĕ, анчах унти хăшпĕр статьясем, пуринчен ытла 8-мĕш статья, забастовкăсем тума пулăшма çеç пултараççĕ. Рузвельт çапла каланă: вăл забастовкăсене сирсе тăрас тĕлĕшпе правительствăн полномочийĕсене чăнласах вăйлатакан законопроекта ырлама хатĕр, çав тĕллеве пурнăçа кĕртес тесе, вăл çар повинноçĕн законĕ çумне тÿрлетÿ хушса çырма сĕнет. Çав хушса çырнă тÿрлетÿ правительствăна 65 çула çитнисем таранах çара нестроевой служубăна илме ирĕк памалла. Çакă вăл, тенĕ заявленире, правительствăна çар завочĕсенчен забастовкăсене хутшăнакан кирек хăш рабочие те çар службине илме май парать, тенĕ.

Представительсен палати 224 сасăпа (хирĕç 108 сасă пулнă), сенат 56 сасăпа (хирĕç 25 сасă пулнă) çав законопроекта Рузвельт пăрахăçа кăларнине кил-лĕшмен. Çапла вара вăл законопроект вăя илсе пурнăçа кĕнĕ.

Çитес вăхăтра ирттермелли докладсемпе калаçусен темисем

1. Совет Союзĕн отечественнăй вăрçин икĕ çулталăкĕ.
2. Гитлеровецсен Совет Союзне пуснăрлас ĕмĕтпе тунă авантюристла планĕсем путланса ларни.
3. Совет Союзĕн çарпа политика тĕлĕшĕнчи тата тĕнчери лару-тăрăвĕ.
4. Гитлерла Германин çарпа политика тĕлĕшĕнчи тата тĕнчери лару-тăрăвĕ питех те начарланса çитни.

Предприятисемпе учреждениесенче ирттермелли калаçусен темисем (çÿлте асăннă темăсемсĕр пусне)

1. Вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çарпа совет тылĕ çирĕпленни.
2. Фашистла государствăсен союзĕ арканса каяс патне çитни.
3. Пирĕн тăван çĕршыван тĕнчери лару-тăрăвĕ тĕрекленни, СССР-ăн, Англин, США-н боевой союзĕ çирĕпленни.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Фашистла Италие пыра-пыра çапни

Юлашки вăхăтра ютçĕршывсенчи пичет Италири лару-тăру çинчен нумай çырать. Италие халь ĕнтĕ союзниксен войскисемпе авиацийĕ вăйлăнрах та вăйлăнрах пыра-пыра çапаççĕ. Июнĕн 11-мĕшĕнче союзниксен войскисем Сицили проливĕнче Италин тĕреклетнĕ тинĕс çар базипе авиаци базине — Пантеллери утравне йышăнса илчĕç. Тепĕр темиçе кунран Лампедуза, Линос тата Лампионе утравĕсем парăнчĕç. Çапла ĕнтĕ союзниксен авиацийĕшĕн Итали территорийĕ уçăлса юлчĕ. Фашистсен паллă радиообозревателĕ Марио Аппелиус нумаях пулмасть йышăннă тăрăх, Англипе Америка самолечĕсем «пĕтĕмпех Итали сывлăшĕн хуçисем пулса тăчĕç».

Союзниксен авиацийĕн бомбардировщикĕсем юлашки вăхăтра Италин Сицилири тата Сардинири аэродромĕсене уйрăмăнах хаяррăн пыра-пыра çапрĕç. Çакăнпа пĕрлех, союзниксен авиацийĕ Специпе Неапольри тинĕс-çар базисене пыра-пыра çапрĕ. Июнĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен самолечĕсем Неаполь çине хаяррăн вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула арсеналăн çурри, торпедăсем туса кăларакан завод, артиллери склачĕсемпе гараж арканнă. Самолетсем валли фюзеляжсем туса кăларакан Бред заводне вăйлăн сиенленĕ.

Венгрин „Пестер-Ллойд“ хаçачĕн Римри корреспонденчĕ пĕлтерне тăрăх. Итали çар производстви министрĕ Савагросса çапла каланă: «Итали правительствин çар завочĕсене хуласенчен ял районĕсене ирĕксĕрех куçарса кайма лекет“, тенĕ. „Пополо д'Италиа“ хаçат пĕлтерне тăрăх, корпораци министрĕ Чанетти сенатра Итали промышленноçĕ умĕнче калама çук пысăк йывăрлăхсем тăнине йышăннă.

Фашистла руководствăн шалти йывăрлăхĕсене фашистла директори (фашистла партин ертсе пыракан центрĕ) Муссолини патне янă çыру уççăнах кăтартса парать. Унта „халăхăн шухăш-кăмăлне кирек мĕнле пăсма хăтланнине те хирĕç» çĕнĕ законсем йышăнма кирли çинчен каланă.

Фашистла директори рабочисемпе хресченсене тата çамрăксене „хăйсен тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме“ çине тăрсах чĕнсе çырать. „Фашистла партин нациллĕ директорийĕ, — тенĕ çав çырура, — мĕнпур производительсене хăйсен продукцине нациллĕ запассен фондне пама хушать... Рабочисене хăйсен тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме тата ĕç тухăçлăхне вăй çитнĕ таранах ÿстерме хушать... Çамрăксене пурне те самант йывăрри çинчен аса илтерет, тĕрлĕ кирлĕ-кирлĕ мар ĕçсем пирки тавлашса ларма халĕ вăхăт та мар, вырăнлă та мар тесе шутлать“.

Италин фашистла ушкăнĕ хушшинчи шалти хирĕçÿсем Муссолини влаçа тытса пыракан лагерьте çынсене татти-сыпписĕр вырăнтан-вырăна улăштарса лартнинче те уççăнах палăрса тăраççĕ. Нумаях пулмасть Итали пичечĕ фашистла партин генеральнăй секретарĕ пулнă Видуссони тата корпораци министрĕ пулнă Тиенго фашистла директори составĕнчен тухни çинчен пĕлтерчĕ. „Нью-Йорк таймс“ хаçатăн Бернри корреспонденчĕ Италире сепаратнăй мир тăвассишĕн тăракан çынсене хирĕç Муссолини çĕнĕ çирĕп мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерет.

Италире официальнăй йĕркепе пĕлтерне тăрăх, июнĕн 25-мĕшĕнче Муссолини 16 провинцире фашистла организацин руководителĕсене хăйсен вырăнĕсенчен кăларнă.

Çапла ĕнтĕ, фашистла Италин шалти, çавăн пекех тулашри лару-тăрăвĕ те калама çук çивĕчленсе çитнĕ. Италин Сицили проливĕнчи утравĕсем парăннă хыççăн Германи пичечĕ те хăйĕн тĕнĕл ĕçĕнчи тусĕн малашнехи кунçулĕ пирки питех те шикленсе ÿкнине палăрта пуçларĕ. „Мюнхенер Нейесте Нахрихтен“ хаçат: „итальянецсене вăрçă ĕçĕсем нихăçан та ытлашши телей кÿмен“ тесе çырать. „Вăтаçĕр тинĕсĕ Италия „хăйĕн тинĕсĕ“ тесе шутлать, Çурçĕр Африка вара — Италишĕн инçетри çĕршыв мар, тăваттăмĕш çыран пулса тăрать, çавăнпа та Италия юлашки событисене лăпкăн йышăнни вырăнлă мар пулнă пулĕччĕ“, тесе çырать хаçат. Хаçат хăй Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчи вăрçă ĕçĕсем малалла мĕнле пулса пырасси пирки шикленнине пытарма пултараймасть. Италин лару-тăрăвĕ пирки Геринг органĕ — Эссенри „Националь цейтунг“ хаçат татах та ытларах шикленсе çырать. «Италин оборонăллă вăрçă вăрçма лекет, — тесе çырать хаçат, — малашнехи ĕç пĕтĕмпех Итали халăхĕ мĕнле вăйлăн хирĕç тăнинчен килет. Африкăри аванпостсене çухатни чăннипех те йывăр çухату пулчĕ. Çакă вăл Италин стратегиллĕ лару-тăрăвне вăйлăн пырса тиврĕ“.

Фашистла Италия виçĕ çул вăрçă вăрçса çĕмрĕк такана умĕнче тăрса юлчĕ. Германипе Итали войскисене Çурçĕр Африкăран хăваласа кăларнă хыççăн Итали умне союзниксем унта тÿрремĕнех çĕмĕрсе кĕрес хăрушлăх тухса тăчĕ. Турцин „Ени Асыр“ хаçачĕ Сицили умне тухса тăнă хăрушлăха палăртса: „Сицилие хÿтĕлес ĕçри чи пысăк йывăрлăх—унта пурăнакан халăх фашизма питех те сахал кăмăллани пулса тăрать“, тесе кăтартса парать.

Союзниксем пыра-пыра çапнипе Сицили утравĕ пурĕпĕрех парăнать тесе çырать хаçат. „Тюрк Сесю“ хаçат Италин лару-тăрăвне Францин 1940 çулхи, Германия Франциe çĕмĕрсе кĕрес умĕнхи, лару-тăрăвĕпе танлаштарать. Хаçат Италия Германирен уйăрăлас тенденцие ытларах та ытларах палăртса пынине кăтартса парать. „Халĕ ĕнтĕ Германия,—тесе çырать хаçат,—хаяр противник умĕнче пĕр пĕччен тăрать“.

Тĕнче вăрçин фрончĕсенче тÿснĕ малтанхи пысăк поражениисем Италипе Германи блокне тĕпренех хавшатрĕç. Вăрçă ĕçĕсем Итали территорийĕ çине куçсан, Германия ăна мĕнле те пулин пулăшу парас шанчăка Муссолинипе унăн ушкăнĕ ытларах та ытларах çухатса пыраççĕ. Итальянецсем çине тăрсах пулăшу яма ыйтнисем халиччен нимĕнле ăнăçу та кÿмен. Пулăшу парас вырăнне нимĕçсем итальянецсене хăйсен çыранри укрепленийĕсем çине шанма канаш параççĕ, „хăрушлăх умĕнче хавшаса ÿкме кирлĕ мар“ тесе вĕрентеççĕ. Гитлеровецсен çав канашĕсем Италири çар çыннисене тарăхтараççĕ кăна. Италин çар министрĕн заместителĕ Соричче нумаях пулмасть нимĕçсен Римри журналисчĕсене „Итали çыранĕсем çинчи оборона сооруженийĕсене ытти вырăнсенче тунă укреплениисемпе ниепле те танлаштарма çукки çинчен“ тата „Итали оборонине кучухнехи механизациленĕ хĕçпăшалпа ытларах тĕреклетме кирли çинчен“ пĕлтерме ятарласа пухнă. Çакăнпа ĕнтĕ Соричче Германи енчен пулăшу çук пирки Италин çар çыннисем ÿпкелешнине систернĕ.

Германипе Итали хушшинчи союза Италин ертсе пыракан ушкăнĕсем те кăмăллама пăрахаççĕ. Италире вăрçа хирĕçле тата Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем анлăн саралнине шута илсе, фашистсен хăшпĕр ушкăнĕсем союзниксемпе мĕнле те пулин калаçса татăлма май тупас шутпа, тĕрлĕ маневрсем туса ирттереççĕ. Çав маневрсем пирки чарăнса тăрса Лондонри радио нумаях пулмасть çапла каланă: „Итальянецсемшĕн икĕ çул кăна—Итали халăхĕн е пурăнмалла, апла пулсан вара Муссолинине хăваласа кăлармалла, е Муссолини влаçрах юлать, капла пулсан вара Итали халăхĕн вĕçĕ-хĕррисĕр инкексем тÿсме лекет. Муссолини Италие кучухнехи вăрçăн мĕнпур инкекĕсем ăшне кĕртсе ÿкерчĕ, Итали халăхĕ умĕнче малта татах та хурлăхларах инкексем тăраççĕ-ха. Италин çăлăнса юлас тесен, Муссолинирен хăвăртрах хăтăлмалла“.

Итали фашисчĕсем ырă пурнăç пирки мар мир çинчен сÿпĕлтетеççĕ. Çакă вăл тĕнĕл держависен лагерĕ йывăр кризиса кĕрсе ÿкнине питех те уçăмлăн кăтартса парать. „Совет Союзĕн отечественнăй вăрçин икĕ çулталăкĕ“ çинчен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернинче кун пирки çапла каланă: „Италипе Германи блокĕн тĕнчери лару-тăрăвĕ те çавăн пекех нумай начарланчĕ. Çавна ăна çакăнтан курма пулать: гитлерла Германия хăйенне çĕнĕ союзниксем явăçтарма пултараймарĕ кăна мар, çавăн пекех тата вăл хăйĕн хальхи союзникĕсем çине те шанса тăма пултараймасть. Вăрçăра тÿснĕ поражениисене пула гитлерла Германин хăйĕн союзникĕсем хушшинчи авторитечĕ чакрĕ. Пĕтĕм тĕнчери арена́ра Германия пĕччен тăрса юлни ытларах та ытларах палăрса, ÿссе пырать“.

Çакна ăна Италипе Германи хушшинчи çыхăнусем юлашки вăхăтра начарланса кайни уççăнах çирĕплетсе пама пултарать.

Д. МЕЛЬНИКОВ.

Хусанти юридически института

вĕренме кĕме хатĕрлекен 3 уйăхлăх курс Шупашкарта уçăлать. Курса вăтам шкулăн 9-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене, рабфакăн 3-мĕш курсне пĕтернисене тата çавăн пеккисене ытти-сене те илеççĕ.

Заявленисене çак çулхи июль уйăхĕн 1-мĕш числиччен илеççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене памалла: 1) автобиографи, 2) вăтам шкулăн 9-мĕш класне, рабфакăн 3-мĕш курсне тата çавăн пек ытти шкулсене пĕтерни çинчен калакан справка, 3) çар обязанноçĕ тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (арçынсен кăна), 4) виçĕ фотокарточка.

Курсра касхине вĕрентеççĕ, çавăнпа халĕ ĕçлекен вырăнта ĕçleme пăрахмалла пулмасть. Вĕрентессе июнĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 28-мĕшĕччен вĕрентеççĕ.

Лайăх вĕренсе тухнисене Хусанти Юридически Института вĕренме илеççĕ.

Курса вĕренме çÿрес текенсен заявленисене çак адреспа ярса памалла: Шупашкар хули, Калинин урамĕ, 23-мĕш номерлĕ çурт, 3-мĕш номерлĕ вăтам шкул канцелярийĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕ чăвашсен опера студине вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисем илессине çак çулхи июль уйăхĕн 20-мĕшĕччен тăсни çинчен пĕлтерет.

Студине кĕмелли испытанисем июнь уйăхĕн 25-мĕшпе 26-мĕш числисенче пулаççĕ.

Центрти Главзаготскотăн Чăваш республикинчи конторине ялан ĕçleme çак специальноçсемпе ĕçлекенсем кирлĕ: старши экономист, старши ревизор, ревизор, база хуçалăхĕн начальникĕ, государство закупкисен старши инспекторĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Канаш урамĕ, 21-мĕш номерлĕ çурт, Центрти Главзаготскот. Тел. 6—12, 3—16 2—1

Государствăн Шупашкарти кирпĕч заводне главнăй бухгалтер васкавлăн кирлĕ. Хватгер пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Чувашски урам 72-мĕш номерлĕ çурт.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1376 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. п.